ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН УЙРĂМ САККУНЕСЕН АКЧЕСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çинчен" 2001 çулхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнчи 18 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2001, 40 №; 2005, 64 №; 2009, 80 №; 2010, 85 №; 2011, 88 №; 2012, 96 №; "Республика" хаçат, 2016, пуш уйăхĕн 3-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 8 статьян вуннăмĕш абзацĕнче "3-мĕш, 4-мĕш, 7-мĕш, 8-мĕш, 9-мĕш пункчĕсемпе" сăмахсене "3-мĕш, 4-мĕш, 7–10-мĕш пункчĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

2) 9 статьян иккĕмĕш абзацĕнче "3-мĕш, 4-мĕш, 7-мĕш, 8-мĕш, 9-мĕш пункчĕсемпе" сăмахсене "3-мĕш, 4-мĕш, 7–10-мĕш пункчĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çинчен" 2002 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 13 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2002, 49 №; 2005, 62 №; 2006, 71 №; 2007, 73 №; 2008, 75 №; 2009, 80 №; 2011, 88, 91 №-сем; 2012,

92 (I том), 95 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 5, 7 №-сем; 2014, 3, 6, 12 №-сем; 2015, 5, 12 №-сем; 2016, 2, 6 №-сем; 2017, 7, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 28-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ) 23 статйине çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 8-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"8. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕсем, федераци саккунĕпе тата (е) акчĕсемпе хăйсемпе вĕсем вăя кĕмелли урăхла йĕрке палăртман пулсан, вĕсене официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕреççĕ.";

2) 9-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"9. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ытти акчĕсем, çав шутра патшалăх вăрттăнлăхĕ пулса тăракан сведенисемлĕ е вăрттăнлăхра тытмалли сведенисемлĕ актсем, акчĕсемпе хăйсемпе вĕсем вăя кĕмелли урăхла йĕрке палăртман пулсан, вĕсене алă пуснă кунран пуçласа вăя кĕреççĕ.".

3 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавĕ çинчен" 2012 çулхи çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 38 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 95 №; "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем; 2014, 9 №; 2015, 2, 5 №-сем; 2016, 4 №; 2017, 3 №; "Республика" хаçат, 2018, ака уйăхĕн 4-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ; çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 16 статьяра:

а) 1^1-мĕш пайра:

", çавăн пекех суйлавçăсем вăхăтлăха пырса çитнĕ организаци ертӳçи" сăмахсене кăларса пăрахас;

çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Суйлавçăсем вăхăтлăх пулакан вырăнсенче (больницăсенче, санаторисенче, кану çурчĕсенче, айăпланма пултаракан çынсене тата айăпланакан çынсене хупса усранă тата вăхăтлăха пулакан ытти вырăнсенче) туса хунă суйлав участокĕсем тăрăх хатĕрлемелли суйлавçăсен списокĕсене тивĕçлĕ участокри суйлав комиссийĕсем суйлавçăсен Федераци саккунĕн 64 статйин 16-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă йĕркепе тăратакан заявленийĕсене тĕпе хурса сасăлав кунĕ умĕнхи кунран кая юлмасăр хатĕрлеççĕ. Суйлавçăсем больницăсенче, айăпланма пултаракан çынсене тата айăпланакан çынсене хупса усранă вырăнсенче туса хунă суйлав участокĕсем тăрăх хатĕрлемелли суйлавçăсен списокĕсене çавăн пекех суйлавçă вăхăтлăх пулакан организаци ертӳçи тăратнă суйлавçăсем çинчен калакан сведенисене тата суйлавçăсен çак статьян 15-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă йĕркепе тăратакан заявленийĕсене тĕпе хурса хатĕрлеççĕ.";

ă) 5-мĕш пайра "территорири" сăмаха "тивĕçлĕ" сăмахпа улăштарас, "территорири" сăмаха "тивĕçлĕ" сăмахпа улăштарас;

б) 15-мĕш пайра "(çавнашкал суйлавçăсене суйлавçăсен списокне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавĕнче сасăламалли кун вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕнче, вырăнти референдумра сасăламалли кунпа пĕр килнĕ чухне те çав йĕркепе кĕртеççĕ)" сăмахсене кăларса пăрахас;

2) 17 статьян 3-мĕш пайĕнче иккĕмĕш предложение кăларса пăрахас;

3) 18 статьян 13-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацĕнче "федерацин инвалидсен реестрне:" сăмахсене ", патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине вырнаçтарнă:" сăмахсемпе улăштарас;

4) 21 статьяра:

а) 1^{3}-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă) 2-мĕш пайра "1^{1}-мĕш е 1^{2-1}-мĕш пункчĕсемпе" сăмахсене "1^{1}-мĕш пункчĕпе" сăмахсемпе улăштарас, "1^{1}-мĕш е 1^{3}-мĕш пайĕсемпе" сăмахсене "1^{1}-мĕш пайĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

5) 26 статьян 1-мĕш пайне "политика партийĕсем" сăмахсем хыççăн "(политика партийĕн уставĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче, унăн регионти уйрăмĕсем)" сăмахсем хушса хурас;

6) 27 статьяра:

а) 2^1-мĕш пайра:

"а" пунктра "тивĕçлĕн кандидат е политика партийĕн полномочиллĕ представителĕ çирĕплетет" сăмахсене "кандидат çирĕплетет" сăмахсемпе улăштарас;

"ă" пунктра "тивĕçлĕн кандидат е политика партийĕн полномочиллĕ представителĕ çирĕплетет" сăмахсене "кандидат çирĕплетет" сăмахсемпе улăштарас;

ă) çакăн пек çырса 3^3-мĕш пай хушса хурас:

"3^3. Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн суйлав ирттернĕ чухне кандидат кандидата регистрацилеме кирлĕ документсене тăратнă самант тĕлне ют çĕршыв агенчĕ статусне пăрахăçлама тивĕçлĕ.";

7) 29 статьяра:

а) 2-мĕш пайăн иккĕмĕш абзацĕнче пĕрремĕш предложение кăларса пăрахас;

ă) 3-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра "хăйĕн сайтне" сăмахсене "хăйĕн официаллă сайтне" сăмахсемпе улăштарас;

улттăмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

8) 29^1 статьян 13-мĕш пайĕнче "25 процентĕнчен ытла пулмалла мар" сăмахсене "50 процентĕнчен ытла пулмалла мар" сăмахсемпе улăштарас;

9) 30 статьяра:

а) 1-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацĕнче иккĕмĕш предложение çакăн пек çырса хурас: "Кандидата регистрацилеме кирлĕ документсене кандидат сасăлав кунĕччен 57 кунран маларах мар тата 50 кунран каярах мар тапхăрта вырăнти вăхăтпа 18 сехетчен тăратать.";

ă) çакăн пек çырса 2^6-мĕш пай хушса хурас:

"2^6. Енчен те Чăваш Республикин Пуçлăхĕн должноçне суйланма килĕшни çинчен çырнă заявленире кандидат ют çĕршыв агенчĕ пулни çинчен калакан сведенисене кăтартнă пулсан, кандидат Чăваш Республикин Суйлав комиссине кандидата регистрацилеме кирлĕ ытти документсемпе пĕрле кандидата ют çĕршыв агенчĕсен реестрĕнчен кăларни çинчен федерацин ĕç тăвакан влаçĕн коммерциллĕ мар организацисене регистрацилес сферăра патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата ăна нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕç-хĕл пурнăçлакан органĕн пĕлтернине е тата судăн тивĕçлĕ йышăнăвне тăратать.";

б) 3-мĕш пайăн иккĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

в) 6-мĕш пайра:

çакăн пек çырса 3^1-мĕш пункт хушса хурас:

"3^1) кандидат Федераци саккунĕн 33 статйин 3^4-мĕш пункчĕпе тата çак Саккунăн 27 статйин 3^3-мĕш пайĕпе пăхса палăртнă требованисене пурнăçламанни;";

7-мĕш пунктра "2-мĕш, 3-мĕш пайĕсемпе" сăмахсене "2-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацĕпе, 3-мĕш пайĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

8-мĕш пунктра ", енчен те федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан" сăмахсене кăларса пăрахас;

9-мĕш пунктра ", енчен те федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан" сăмахсене кăларса пăрахас;

15-мĕш пункта "çак Саккунпа палăртнă" сăмахсем хыççăн "тивĕçлĕ" сăмах хушса хурас;

10) 31 статьян 2-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

11) 38 статьяра:

а) ятĕнче "тата кулленхи пичет кăларăмĕсенче" сăмахсене ", кулленхи пичет кăларăмĕсенче тата сеть кăларăмĕсенче" сăмахсемпе улăштарас;

ă) "тата кулленхи пичет кăларăмĕсенче" сăмахсене ", кулленхи пичет кăларăмĕсенче тата сеть кăларăмĕсенче" сăмахсемпе улăштарас;

12) 39 статьяра:

а) 5-мĕш пайра ", федераци саккунĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 7-мĕш пайра ", федераци саккунĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне" сăмахсене кăларса пăрахас тата "ют çĕршыв агенчĕ шутланакан регистрациленĕ кандидат, тата е" сăмахсене кăларса пăрахас, "ют çĕршыв агенчĕ е тата кандидат шутланать" сăмахсене "кандидат шутланать" сăмахсемпе улăштарас;

б) 9-мĕш пайра ", федераци саккунĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне" сăмахсене кăларса пăрахас;

в) 12-мĕш пайра ", федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан" сăмахсене кăларса пăрахас;

13) 40 статьян 15-мĕш пайĕнче "ют çĕршыв агенчĕ шутланакан кандидат," сăмахсене кăларса пăрахас, тата "ют çĕршыв агенчĕ е тата" сăмахсене кăларса пăрахас;

14) 42 статьяра:

а) çакăн пек çырса иккĕмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Кандидат Чăваш Республикин Суйлав комиссине агитацин пичет материалĕсен экземплярĕсене е копийĕсене, илтĕнекен-курăнакан агитаци материалĕсене е копийĕсене, сăн ўкерчĕксене, агитацин ытти материалĕсен экземплярĕсене е копийĕсене вĕсене халăхра сариччен тăратма тивĕçлĕ. Çавăн пекех кăтартнă материалсемпе пĕрле çак материалсене хатĕрленĕ тата заказ панă юридически сăпатăн, уйрăм предпринимателĕн адресĕ çинчен (физически сăпат пурăнакан вырăнăн адресĕ) сведенисене тата тивĕçлĕ суйлав фондĕнчен илнĕ асăннă суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене хатĕрленĕшĕн тўленине çирĕплетекен документ копине тăратмалла. Кăтартнă материалсемпе пĕрле суйлав умĕнхи агитаци материалĕсен электронлă тĕсĕсене машинăпа вуламалли майпа Чăваш Республикин Суйлав комиссине тăратмалла.";

ă) иккĕмĕш тата виççĕмĕш абзацсене тивĕçлĕн виççĕмĕш тата тăваттăмĕш абзацсем тесе шутлас;

б) çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Федераци саккунĕпе килĕшўллĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тивĕçлĕ территорири суйлав комиссийĕ сĕннĕ тăрăх сасăлав кунĕччен 30 кунран кая юлмасăр кашни суйлав участокĕн территорийĕнче агитацин пичет материалĕсене вырнаçтарма ятарлă вырăнсем уйăрма тивĕç.";

15) 46 статьяра:

а) 2-мĕш пайăн саккăрмĕш абзацĕнче "расчет документчĕсенче" сăмахсене "тўлев (расчет) документчĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 4-мĕш пайра:

çакăн пек çырса иккĕмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Кандидатăн суйлав фончĕ тăкаклакан (кандидата регистраци тăвиччен тăкаклама юракан) укçа-тенкĕн чи пысăк виçи кандидатăн суйлав фончĕ тăкаклакан укçа-тенкĕн çак пайпа палăртнă чи пысăк виçин 30 процентчĕпе танлашать.";

иккĕмĕш абзаца виççĕмĕш абзац тесе шутлас;

16) 47 статьян улттăмĕш абзацĕнче "пĕтĕмĕшле" сăмаха кăларса пăрахас;

17) 48 статьян 5-мĕш пайĕн "д" пунктне ", тата кандидатсен финанс отчечĕсене тăратнин тата тĕрĕсленин результачĕсем тăрăх Чăваш Рес-

публикин Суйлав комиссине правăна сыхлакан тата ытти органсене кирлĕ мерăсем йышăнма тата Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн айăплă çынсене явап тыттарма тивĕçлĕ материалсене ярса парасси çинчен сĕнӳсем тăратать" сăмахсем хушса хурас;

18) 51 статьяра:

а) 6-мĕш пайăн 6-мĕш пунктĕнче "(унăн регионти уйрăмĕ)" сăмахсене тата "(унăн регионти уйрăмĕн)" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 7-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

б) 8^1-мĕш пайра "ют çĕршыв агенчĕ е тата" сăмахсене кăларса пăрахас;

в) 9-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацĕнче "6-мĕш тата 7-мĕш пайĕсенче" сăмахсене "6-мĕш тата 6^1-мĕш пайĕсенче" сăмахсемпе улăштарас;

г) 20-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"20. Сасăлав кунĕнче (сасăлавăн юлашки кунĕнче) сасăлав вăхăчĕ вĕçленнĕ хыççăн суйлав комиссийĕсенче усă курмасăр юлнă суйлав бюллетенĕсене Федераци саккунĕн 68 статйин 3-мĕш пункчĕн требованийĕсемпе, çак Саккунăн 55 статйин 3-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн шутласа тухаççĕ тата пăрахăçлаççĕ. Мĕн пур суйлав комиссийĕсенче, участокри суйлав комиссийĕсемсĕр пуçне, усă курман суйлав бюллетенĕсене пăрахăçланă чухне пăрахăçланă суйлав бюллетенĕсен хисепне кăтартса акт çыраççĕ. Суйлав бюллетенĕсене пăрахăçланă çĕре Федераци саккунĕн 30 статйин 3-мĕш пунктĕнче кăтартнă çынсем хутшăнма пултараççĕ. Çав суйлав бюллетенĕсене суйлав комиссийĕн секретарĕ суйлав комиссийĕн ытти документĕсемпе пĕрле упрать.";

19) 55 статьяра:

а) 3-мĕш пайра пĕрремĕш предложение çакăн пек çырса хурас: "Сасăлав вăхăчĕ вĕçленнĕ хыççăн участокри суйлав комиссийĕн татса паракан сасă правиллĕ членĕсем сăнавçăсем, Федераци саккунĕн 30 статйин 3-мĕш пунктĕнче кăтартнă ытти çынсем умĕнче усă курман суйлав бюллетенĕсене шутласа тухаççĕ те суйлавçă паллă лартмалли тăваткалсене пăсмасăр Раççей Федерацийĕн Тĕп суйлав комиссийĕ Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн палăртнă меслетсемпе çавнашкал суйлав бюллетенĕсене малалла усă курма юрăхсăр пултăр тесе пăсса пăрахăçлаççĕ, ун хыççăн пăрахăçа кăларнă усă курман суйлав бюллетенĕсен, çавăн пекех сасăлав ирттернĕ чухне суйлавçăсем пăснă суйлав бюллетенĕсен хисепне пурте илт-

мелле пĕлтереççĕ тата сасăлав итогĕсен протоколĕн тата сасăлав пӳлĕмĕнче вырнаçнă унăн пысăклатнă формин 5-мĕш йĕркине çырса хураççĕ.";

ă) 22-мĕш пайра "(çак статьян 6-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн ирттерекен тĕрĕслесе шайлаштарнисĕр пуçне)" сăмахсене кăларса пăрахас;

20) 56 статьян 9-мĕш пайне "вăл шутра" сăмахсем хыççăн "кандидата ырласа алă пуснă листасене, алă пустармалли хутсене," сăмахсем хушса хурас.

4 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулли
2024 çулхи раштав уйăхĕн 3-мĕшĕ
87 №